33-114
1563

Пĕтĕм тĕнђери пролетарисем,
пĕрлешĕр!

ЧĂВАШПАРТ-
ИЗДАТ
№ 353/1

# КАРЛ МАРКС ВИЛНĔРЕНПЕ 50 ҪУЛ ТУЛНĂ ҪĔРЕ

ЂĂВАШИСТАТ
1 9 3 3

# Карл Маркс вилнĕренпе 50 çул тулнă çĕре

1933 çулти мартăн 14-мĕшĕнђе револютсиллĕ комунисăм никĕсне хывнă аслă уђитлĕ, пĕтĕм тĕнђери пролеттарисен малтанхи ђи аслă револютсиллĕ çулпуçĕ Карл Маркс вилнĕренпе 50 çул тулаť.

Пĕтĕм тĕнђери пролеттариатăн аслă çулпуçĕпе ђаплă теореттĕкĕ хăйĕн куçĕсене хупнăранпа 50 çул тулгарнă кун—револютсиллĕ пролеттариатпа ĕçхалăхĕ тĕнђен улттăмĕш пайĕнђе сотсиалисăм строиттĕлствин 1-мĕш петтилеткине тултарса, сотсиалисăм економĕкĕн никĕсне хывса çитерсе, Ленинăн „каммкама" тенĕ ыйтăвне (кăпиталиссем пире-и, йе епĕр вĕсене-и?) промышлĕннăçра та йалхуçалăхĕнђе те тататăклăнах сотсиалисăм майлă татса, классăр сотсиалисăмла опђă тăвас сатађлă иккĕмĕш петтилеткă фронтĕнђе çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерӳсем тăваť. Маркс вилнĕренпе 50 çул тулнă кун тĕнђен ытти пайĕнђе кăпиталисăм нихăçанхинђен вăйлă криçĕспе асапланаť. Çак криçĕс хуçалăхăн кăпиталисăмла çиçтеми 1917 çултанпа (СССР тĕнђери кăпиталисăмла хуçалăхран уйăрлса тухнăранпа) хăйĕн никĕсĕнђенех çĕрсе пынă саманара пулса пыраť. Ђылай çĕршывсенђе револютсиллĕ криçĕс хăпарса çитет, пролеттариат çак криçĕсран револютсиллĕ майпа тухассишĕн вăйлăрах та вăйлăрах кĕрешсе пыраť. Маркс кăпиталисăм çиçтеми пурпĕрех ишĕлсе анассине, кăпиталисăм ишĕлсе аннă татăк-кĕсĕксем çинђе пролеттариат çĕнĕ, классăр сотсиалисăмла опђă тăвассине кăтартса панă.

Пĕтĕм тĕнђе историйĕ Маркс вĕрентни тĕрĕс иккение пĕтĕмпех çирĕплетсе пађĕ пулсан, етем опђи сотсиалисăм тĕнђипе кăпиталисăм тĕнђине уйăлса, пĕри (сотсиалисăм) кунсерен çĕнтерсе, иккĕмĕшĕ (кăпиталисăм) кунсерен çĕрсе ишĕлсе пынă вăхăтри кунсем—Маркс ăслăлăх тăрăх каласа хуни пурнăçра

питех те тĕрĕс пулнине çак кунсем нихăçанхинҫен татăклă çирĕплетсе параççĕ.

## Карл Марксăн ĕмĕрĕ

„Карл Маркс 1818 çулта майăн 5-мĕшĕнҫе Трир хулинҫе (Рейн таврашĕнҫи Пруççи) çуралнă. Ашшĕ унăн атваккат, 1824 çулта проттестанла тĕн йышăннă йеврей пулнă. Маркс çемйи пуйан, куҫттурлă çемйе пулнă, анҫах революҫутсиллĕ пулман. Трир хулинҫе кимнаçире вĕренсе тухсан Маркс универçитетра правă, пуринҫен ытла историпе философи вĕреннĕ: универçитетран 1841 çулта вĕренсе тухнă. Хăйĕн ăс-шухăшĕсем тĕлĕшĕнҫен Маркс ун ҫухне кекелйанĕс-итеалис пулнă. [Кекĕл (1770—1831 çç.)—ҫапла нимĕç философăфĕ. Вăл вĕрентнĕ тăрăх, пирĕн тавра мĕн пурри (тĕнҫе)—итей палăрăмĕ. Апла пулсан, пирĕн тавра мĕн пуррин (тĕнҫен) пуçламĕшĕ—итей. Кекĕл шухăшĕпе, тĕнҫе вăл пулса çитсе хытса ларнă йапала мар, вăл йалан улшăнсах, малалла кайса пыраť. Унăн вĕрентĕвĕн çак йенĕ—революҫутсиллĕ йенĕ. Анҫах ун шухăшĕпе, çак йалан пыракан улшăну итей аталанса пынин палăрăмĕ çеç пулса тăраť. Çемйе те, патшалăх та, тĕн те çак итей аталанăвĕн тĕрлĕ пусăмĕсем. Итей хăй аталанса пынă май, тĕрлĕ пусăмсем туса, ăçтан пуçланса кайнă çавăнтах пырса тухаť. Сăмахран, вăл Пруççири апсоҫутлă монархине итейăн ҫи йулашки, аслă вĕçĕ тесе шутланă. Çак йенĕ—ун вĕрентĕвĕн реаксиллĕ йенĕ пулса тăраť]. Маркс Перлинра Кекĕл философин революҫутсиллĕ йенне малалла йама тăрăшакан „сулахай кекелйанĕссен" крушокĕнҫе тăнă.

Профессăр пулас тесе шутласа, универçитет пĕтерсен Маркс Понн хулине куçаť. Анҫах правиттĕлствăн реаксиллĕ политтĕкне пула Марксăн профессăр пулас çула пăрахмалла пулнă. „Сулахай кекелйанĕссен" ăс-шухăшĕсем вăл вăхăтра Керманире вăйлăн малалла хунаса пынă Çав вăхăталла Ҫутвик Фейерпах йатлă философăф материалисăм йенелле çаврăнса ӳкет.

[Фейерпах Маркспа Енкӗлс умӗнхи ђаплă маттериалис—философăф пулнă. Вăл вӗрентнӗ тăрăх, тӗнђепе мӗн пур пурнăç етем шухăшӗнђен йе итейран килмест,—етем шухăшӗ хăй вӗсенђен килет. Турă мар тӗнђене тунă, етем хăй турра шухăшласа кăларнă. Анђах Фейерпах çынна опђăра пурăннă халлӗн илмен, уйрăмăн илнӗ, етем пурнăçӗ опђăри происвотствăпа çыхăнса тăнине ăнланман. Çавăн пекех тата вăл Кекӗлӗн тӗшмӗшлӗхне (реаксилле йенне) криттӗкленипе пӗрлех унăн революутсиллӗ йенне те (тиалектӗккăна) йышăнман. Фейерпах тӗнђе мӗнле тытăнса тăнине ăнлантарса панă çеç, ăна çӗнетмеллине, кирлӗ май улшăнтармаллине ăнланман]. 1841 çулта вăл—„Хриçтианствăн тупсăмӗ“. 1843 çулта „Малашнехи философфин тӗп шухăшӗсем“ йатлă кӗнекесем кăларат. „Çак кӗнекесен ирӗклӗхе кăларакан вăйне пурăнса ирттермелле пулнă“ тесе çырат çак кӗнекесем çинђен кайран Енкӗлс.—«Епӗр (урăхла каласан, „сулахай кекелйăнӗссем“, вăл шутра Маркс та) трукак Фейерпах хыççăн пыракансем пулса тăтăмăр“. Вăл вăхăтра Рейнри ратикаллă пуршуйсем, хăшпӗр йенђен сулахай кекелйанӗссемпе пӗр пек шухăшлаканскерсем, Келн хулинђе „Рейн хаçаđӗ“ йатлă оппоçитсиллӗ хаçат орканисатсиленӗ. Маркспа Пруно Пауера вӗçем унта тӗп ӗçлекенсем вырăнӗнђе ӗçлеме ђӗннӗ.

1842 çулхи октăпӗрте Маркс аслă ретактăр пулса тăрат, çавăнпа та вăл Поннран Келн хулине куçат. Маркс ретаксиленӗ вăхăтра хаçат революутсиллӗ темократтиллӗ çулпа кайни паллăрахран та паллăланса пынă. Çавăнпа та правиттӗлствă хаçата ик-виç ђенсур витӗр кăларса тăнă, кайран вара, 1843 ç. йанварӗн 1-мӗшӗнђе, ăна хупма йышăннă.

Йут патшалăхра Арнољт Руке йатлă йулташӗпе ратиккаллă шурнал кăларас тесе, 1843 ç. кӗркунне Маркс Париш хулине пынă. Анђах çак шурналăн пӗрремӗш кӗнеки çеç тухма ӗлкӗрнӗ: Керманире ăна вăрттăн сарма хӗн пулнă, тата Рукепе те тавлашу тухса кайнă. Çак шурналти статйасенђе Маркс

револютсионер иккенни, вăл ун ђухнехи пĕтĕм йĕркесене пĕр хĕрхенмесĕр криттĕклени, **массăпа пролеттариат** çине тĕренни палăрса тăраť.

1844 ç. çенťапĕрте Париша ик-виç кунлăха Енкĕлс пыраť. Паришре ун ђухне вĕресе тăракан револютсиллĕ ушкăнсен ĕçне хастарлă хутшăнса, вак буршуаллă сотсиалисăмăн тĕрлĕ вĕрентĕвĕсемпе кĕрешсе пырса, вĕсем иккĕшĕ револютсиллĕ **пролеттариллĕ сотсиалисăма**, урăхла каласан, комунисăм (марксисăм) теорипе тактĕкне пуçласа йанă. 1845 çулта, Пруççи правиттĕлстви сĕннипе, Маркса хăрушă револютсионер тесе Паришран хăваласа кăлараççĕ. Вăл Пруççел (Пелки) хулине куçаť. 1847 çулта Марксла Енкĕлс „Комуниссен сойусĕ" текен вăрттăн ĕçлекен проппакантисла ушкăн çумне хутшăннă, вăл сойусăн 2-мĕш сйесĕнђе (1847 çулти нойапĕр, Лонтăн) калама çук хастарлă ĕçленĕ. тата вăл хушнипе „Комуниссен парттин манифесĕ" йатлă кĕнеке çырса кăларнă. Çак кĕнекере тĕнђе çине çĕнĕлле мĕнле пăхассине пит те ăслăн, паллăн ăнлантарса панă. Унта вĕçне çити маттериалисăма, етем пурнăçне те ăнлантарса паракан маттериалисăма: тĕнђере мĕн пурĕ улшăнса пыни çинђен, классен кĕрешĕвĕн теорийĕ çинђен тата пролеттариат пĕтĕм тĕнђе историйĕнђе мĕнле вырăн йышăнса тăрасси çинђен, вăл çĕнĕ, комунисăм йĕрки тăвасси çинђен татăклă, пур йенђен те вĕрентекен тиалектĕккăна пит те ăслăн, паллăн ăнлантарса панă.

1848 ç. февраљ револютсийĕ пуçлансанах Маркса Пелкирен кăларса йанă. Вăл каллех Парише пынă, унтан, мартри револютси хыççăн, Керманийе Келн хулине кайнă. 1848 ç. ийунĕн 1-мĕшĕнђен пуçласа 1849 ç. майăн 19 мĕшĕнђен Келнра „Çĕнĕ Рейн хаçатне" ретаксиленĕ. 1848 çулхи револютси çĕнĕ теори тĕрĕссине пит те лайăх çирĕплетсе панă. Вăл çапла иккенне кайран пĕтĕм тĕнђери çĕршывсенђи пролеттариллĕ, тата темократиллĕ йухăмсем кăтартса тăнă. Çĕнтерсе илнĕ контрреволютси Маркса малтан сута панă (1849 ç. февралĕн 9-мĕшĕнђе тÿрре кăлар-

нă), кайран Керманирен кăларса йанă (1849 ç. майăн 16 мĕшĕнђе). Малтан Маркс Парише кайнă, 1849 ç. ийунĕн 13 мĕшĕнђи темонстратси хыççăн ăна унтан та кăларса йанă. Кун хыççăн вара вăл Лонтăна кайса, вилиђђенех унта пурăннă.

Йут патшалăхри пурнăç условийĕсем питĕ йавăр пулнă. Маркспа унăн çемйине нуша пит вăйлă асаплантарнă. Енкĕлс укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнђен йаланах пулăшса тăни çеç Маркса „Кăпитал" йатлă кĕнекине çырса пĕтерме май панă. Унтан пуçне тата ун ђухне çирĕп тытăнса тăракан вак пуршуаллă, кĕскен каласан—пролеттариллĕ мар сотсиалисăм йухăмĕсене пула, Марксăн йаланах пĕр хĕрхенмесĕр çапăçмалла пулнă, хăшпĕр ђух унăн ăна (Маркса) пĕр намăса пĕлмесĕр елекленисене хирĕç те кĕрешмелле пулнă. Маркс хăйĕн маттериалисăмла теорине малалла йанă. Политтĕк економи ăслăлăхне Маркс „Политтĕк еккономи криттĕклес пирки" (1859 çул), тата „Кăпитал" (пĕрремĕш том, 1867 çул.) кĕнекисенђе револђутсилетнĕ.

50-мĕшпе 60-мĕш çулсенђе, темократтиллĕ йухăм вăйланнă вăхăтра, Маркс каллех практĕклă ĕçе тытăнаť. 1864 çулта (çенťапĕрĕн 28-мĕшĕнђе) Лонтăнра 1-мĕш Интернатсионал—„Пĕтĕм тĕнђери рапођђисен йулташлăхĕ"—уçăлнă. Маркс çак йулташлăхăн ђунĕ, унăн пĕрремĕш „ђĕнсе каланине", тата тĕрлĕ ресолђутсийĕсене, сайавленийĕсене, манифесĕсене çыраканĕ пулнă. Тĕрлĕ çĕршывсенђи рапођђисен йухăмне пĕрлештерсе пырса, пролеттариллĕ мар (Марксђенхи) сотсиалисăмăн тĕрлĕ формисене (Матçини, Прутон, Паккунин, Анклири липераллă трет-йунионисăм, Керманире Лассалле сылтăмалла пăрк-лани, т. ыт. те) пĕрле ĕçлес çулпа йама тăрăшса, çак çектăсемпе шкулсен тĕрлĕ теорийĕсемпе кĕрешсе пырса, Маркс тĕрлĕ çĕршывсенђи рапођђи класăн кĕрешӳ тактĕкне хатĕрлесе пынă. Маркс пит те вырăнлă хакланă („Франтсири краштăн вăрçи") Париж Комунĕ пĕтсе ларнă хыççăн (1871 ç.), тата паккунисем (анархиссем) пĕрремĕш Интернатсионала ниме

уйăрнă хыççăн, Интернатсионал Иевроппăра ĕçлесе тăма пултарайман. Интернатсионалăн Каакăри конкресĕ хыççăн (1872 ç.) Маркс тăрăшнипе Интернатсионалăн аслă советне Ӈйу-Йорка куçармалла тунă. Пĕрремĕш Интернатсионал çакăнтан вара хăйĕн историллĕ ĕçне туса пĕтернĕ. Унăн вырăнне пĕтĕм тĕнҫери рапоҫҫисен йухăмĕ виççе илейми пысăк утăмсемпе ӳсмелле вăхăт, вăл йухăм сарлакаланса ӳсмелли, уйрăм патшалăхсенҫи рапоҫҫисен сотсиалисла парттийĕсем ӳсмелли вăхăт пуçланса кайаť.

Интернатсионалта питĕ те хĕрӳллĕ ĕçлени, пуринҫен ытла теори тĕлĕшĕнҫен пит те вăйлă ĕçлени Маркс сывлăхне пĕтĕмпех имшертсе хăварнă. Темĕн ҫухлĕ маттериалсем пухса, тата тĕрлĕ ҫĕлхесене вĕренсе (сăмахран, вырăс ҫĕлхине) вăл политтĕк еккономине çĕнетес ĕçне, тата „Кăпитала" çырса пĕтерес ĕçне малалла туса пынă. Анҫах „Кăпитала" çырса пĕтермешкĕн ăна ҫирĕ ҫарнă. 1881 ç. теккапĕрĕн 2-мĕшĕнҫе унăн арăмĕ вилнĕ. 1883 ç. мартăн 14-мĕшĕнҫе Маркс хăй тенкелĕ çинҫех ĕмĕрлĕхе çывăрса кайнă Ăна арăмĕпе пĕрле Лонтăнра Хайкейт масарĕнҫе пытарнă" (Ленин).

## Маркçисăм—пролеттариатăн ҫи пысăк хĕçпăшалĕ

„Тарвин ҫĕрҫун тĕнҫин ӳсĕм саккунне тупнă йевĕрлех, Маркс етем историйĕн ӳсĕм саккунне тупнă „(Енкĕлс)." Маркçисăм философийĕ—маттериалисăм. Иевроппăн пĕтĕм çĕнĕ историйĕ тăршĕнҫе, пуринҫен ытла XVIII-мĕш ĕмĕр вĕçĕнҫе Франтсире... маттериалисăм... тĕрлĕ тĕшмĕшлĕхсене, суйа вĕрентӳсене хирĕç кĕрешекен пĕртен пĕр йĕркеллĕ философфи пулса тăраť. Темократти тăшманĕсем çавăнпа хăйсен мĕн пур вăйĕпе маттериалисăма „пăрахăçа кăларма", пĕтерме, елеклесе варлама тăрăшса, мĕнле те пулин тĕн хутне кĕрекен философфиллĕ итеалисăмăн тĕрлĕ формисене хӳтĕлесе тăнă. Маркспа Енкĕлс философфиллĕ маттериалисăмшăн ҫи татăклă кĕрешсе пынă.

Анђах Маркс XVIII мĕш ĕмĕрхи маттериализăм çинђе ђаранса тăман, философфийе малалла йанă. Ăна вăл нимĕçсен клаççĕкла философфийĕн, пуринђен ытла... Кекĕл çиçтемин çитĕнĕвĕсемпе пуйанлатнă. Çак çитенӳсенђен ђи пахи—тиалектĕккă пулнă, урăхла каласан, тĕнђери пур йапала та ӳсе çитĕнсе пыраť тесе вĕрентни пулнă... Философфиллĕ маттериализăма таранлатса малалла йанă май, Маркс ăна вĕçне çитернĕ: сутçанталăка пĕлессине етем опђи çине те сарнă. Ăслăлăх шухăшĕн пит те пысăк çĕнтерĕвĕ Марксăн историллĕ маттериализăмĕ пулса тăнă. Унђђен историпе политтĕк çине мĕнле пăхас тенĕ çапла пăхни вырăнне—питех те пĕрлĕхлĕ, йĕркеллĕ ăслăлăх теорийĕ, опђă пурнăçĕн пĕр йĕркинђен—происвотствă вайĕсем ӳснипе—тепĕр, çӳлерех тăракан йĕрке, сăмахран, крепăсла йĕркерен кăпитализăм ӳсе, çитĕннине кăтартса паракан теори йышăнђĕ.

Етемĕн тăнланăвĕ унсăр пуçнех пурăнакан сутçанталăка, урăхла каласан—йалан ӳсе çитĕнекен маттерийе ӳкерђĕкле палăртса тăнă йевĕрлех, етемĕн опђăллă тăнланăвĕ те (урăхла каласан; тĕрлĕ шухăшсем, философфи, тĕн, политтĕк, т. ыт. те) опђăн **економĕк йĕркине** ӳкерђĕкле палăртаť. Политтĕк уђрештенийĕсем економĕклĕ никĕсĕн тăррисем пулса тăраççĕ...

Политтĕк йĕркисем економĕк çинђе хăпарса тăракан йапаласем пулнине йышăнса, Маркс пуринђен ытла, çак економĕк йĕркине вĕренес тĕлĕшпе ĕçленĕ. Маркс хăйĕн ђи паха кĕнекине „Кăпитала“ кăпитализăм йĕркине вĕренес майпа çырнă...

Пуршуаллă економиссем йапаласен çыхăнăвĕсене курнă çĕрте (тавара таварпа улăштарни) Маркс **çынсем хушшинђи çыхăну пуррине** палăртса панă. Таварсене улăштарни уйрăм происвотиттĕлсем рынăк урлă çыхăннине кăтартаť. Укçа—çак çыхăну çирĕпленсе пынине, уйрăм происвотиттĕлсен хуçалăх пурнăçне пĕрлештерсе пĕр туса пынине пĕлтерет. Кăпитал çак çыхăну тата та малалла кайнине кăтар-

тат: рапоҫҫи вăйĕ те тавар пулса тăрат. Тара кĕрĕшекен рапоҫҫи хăйĕн ĕç вăйне çĕр хуçине, хапрăксавăт хуçине, ĕçхатĕрсен хуçине сутат. Ĕçкунĕн пĕр пайне рапоҫҫи хăйпе хăйĕн çемйине усрамалли расхутсене витнĕ çĕре йарат (ĕçукçи), ĕçкунĕн тепĕр пайĕнҫе рапоҫҫи ахалех ĕçлет: вăл кăпиталиса хушнă хаклăх, услам, кăпиталиссен класĕн пуйанлăхĕн çăлкуçĕ пулса тăракан хушнă хаклăх туса тăрат.

Хушнă хаклăх çинҫен вĕрентни Марксăн еккономĕк теорийĕн тĕп вырăнĕ пулса тăрат.

Рапоҫҫи ĕçĕпе тунă кăпитал вак хуçасене ишсе пырса, ĕçсĕррисен çарне йышлăлатса пырса, рапоҫҫийе хĕсĕрлесе, пусса тăрат. Шултра происвотствă çĕнтерни промышлĕннăçра труках паллă, анҫах вăл йалхуçалăхĕнҫе те çавăн пекех пулса пырат: кăпиталисла шултра йалхуçалăх малта тăрасси, машинсемпе усă курасси ӳссе пырат, хресҫен хуçалăхĕ укçа кăпиталĕн танатине кĕрсе ӳкет, кайа йулнă технĕккă вăйли хĕсĕрленипе йухăнса пырат. Вак происвотствă йалхуçалăхĕнҫе урăх формăсемпе пĕтсе пырат, анҫах вăл йапăхланса пĕтсе пыни çинҫен пĕртте иккĕленмелли çук.

Вак происвотствăна çĕнтерсе пырса, кăпитал ĕç пултарулăхĕ ӳсесси патне, происвотствăна ҫи шултра кăпиталиссен сойусĕсем çавăрса илесси патне (монопполисем пулса тăрасси патне) илсе пырат. Происвотствă хăй питрех опҫăллă пулса пырат— çĕршер пин, мĕлйуншар рапоҫҫисем пĕр йĕрке тăрăх пыракан хуçалăх орканисăмне çыхăнаççĕ, анҫах пĕрлешсе ĕçленипе пĕр ывăç кăпиталиссем çеç усă кураççĕ. Происвотствăри йĕркесĕрлĕх, криçĕссем, рынăкшăн урса кайсах кĕрешесси, халăх массин нушалăхĕ ӳснĕçемĕн ӳссе пыраççĕ.

Рапоҫҫисем кăпитала пăхăнса тăрассине ӳстернĕ май, кăпиталисăм йĕрки пĕрлешнĕ ĕçĕн калама çук аслă вăйне туса пырат“ (Ленин).

Маркс —опҫă классем çине уйрăлса кайнăранпа унăн историйĕ йаланах классен кĕрешĕвĕ урлă пулса пынине кăтартнă. „Халиҫҫенхи мĕн пур

опӡӑн историйӗ—классен кӗрешӗвӗн историйӗ пулса тӑрат" (Комуниссен манифесӗ). Пусмӑрта тӑракан классен кӗрешӗвӗ ҫинӡе—ирӗке тухассишӗн калакан тӗрлӗ вӗрентӳсем ӳсе-ӳсе пынӑ. Пуринӡен ытла ҫак вӗрентӳсем кӑпиталисӑм опӡин хирӗҫӗвӗсем ҫивӗӡленни палӑрнӑ вӑхӑтра вӑйланма тытӑннӑ. Анӡах ҫакнашкал вӗрентӳсем малтан уттоппиллӗ вӗрентӳсем пулнӑ. Вӗсем класлӑ опӡӑн йухан-суранӗсене криттӗкленӗ, пӗрисене нушалӑхра—теприсене иртӗнсе пурӑнма май паракан опӡӑ вырӑнне вӗсем пуриншӗн те лайӑх пурнӑҫлӑ опӡӑ тӑвасшӑн пулнӑ, анӡах ҫав опӡӑ патне мӗнле ҫулпа пымаллине кӑтартса пама пултарайман. Ӡас-ӡасах вӗсем опӡӑна ҫӗнетес тесе пуйан классен кӑмӑлне ӡӗннӗ, ҫак ӗмӗтленекен опӡӑ патне каймалли ҫул классен кӗрешӗвӗ урлӑ, пролеттари тиктаттурӗ урлӑ выртнине ӑнланса илме пултарайман. Феоталисӑм ӑшӗнӡен, ӑна ҫӗмӗрсе ӳснӗ кӑпиталисӑм классен кӗрешӗвне, класлӑ опӡӑ историйӗ классен кӗрешӗвӗ урлӑ пынине пушшех аван кӑтартнӑ. Маркс вӗрентӗвӗн тӗп пахалӑхӗ—пролеттариатӑн пӗтӗм тӗнӡе историнӡи вырӑнне, вӑл соттсиалисӑм опӡи тӑвакан вӑй пулнине кӑтартса пани пулса тӑрат.

„Пуршуаллӑ историксем классен кӗрешӗвӗн историллӗ ӳсӗмӗ ҫинӡен, пуршуаллӑ еккономиссем классен еккономӗк анаттомийӗ ҫинӡен манран нумай малтан каласа панӑ,—тет Маркс.—Епӗ ҫӗнӗрен туни вӑл: 1) классем пурри происвотствӑ ӳсӗмӗнӡен килекен кӗрешӳн историллӗ паллӑ формисемпе ҫеҫ ҫыхӑнса тӑнине, 2) классен кӗрешӗвӗ пурпӗрех пролеттари тиктаттурӗ патне илсе пынине, 3) ҫав тиктаттурӑ хӑй те хут мӗнле классене те пӗтересси патне, классӑр опӡӑ патне куҫса пыни ҫеҫ пулнине—кӑтартса панинӡе пулнӑ" (Вейтмейер патне ҫырнӑ ҫыруран). Ҫапла вара, Маркс вӗрентнӗ тӑрӑх, комунисӑма куҫас ӗҫе пролеттариат ҫеҫ вӗҫне ҫитиӡӡенех тума пултарат, кӑпиталисӑм „хӑйне вилӗм кӳрекен хӗҫпӑшала туптарса ҫитернӗ ҫеҫ мар, вӑл ҫавӑн пекех тата ҫав хӗҫпӑшала алӑра тытса кӗре-

шекен çынсене те—хаљхи рапоѯѯисене—пролеттарисене çуратнă" (Комуниссен манифесĕ).

„Марксăн философфиллĕ маттериалисăмĕ çеç пролеттариата ѯуралăхран, халиѯѯен мĕн пур пусмăрлă классем пурăннă ѯуралăхран, çăлăнмалли çул кăтартса паѯĕ. Марксăн еккономĕк теорийĕ çеç пролеттариата унăн кăпиталисла йĕрке вăхăтĕнѯи ѯăнѯăн вырăнне кăтартса паѯĕ" (Ленин). „Маркс теорийĕ сотсиалисăма уттоппирен ăслăлăх туса хуѯĕ çак ăслăлăхăн çирĕп никĕсĕсене хурса паѯĕ, тата çак ăслăлăха пĕтĕмĕшпе унăн пур уйрăм йенĕсене малалла аслăлатса йарса мĕнле çулпа пымаллине кăтартса паѯĕ. Вăл хаљхи кăпиталисăм опѯин ăшѯикне кăтартса паѯĕ, рапоѯѯийе тара тытни, рапоѯѯи вăйне сутăн илни мĕнле майпа пурлăхсăр мĕлйун çынсене нумай мар кăпиталиссем (çĕре, хапрăксене, рутниксене т. ыт. те тытса тăракансем) пусмăрланине пытарса тăнине ăнлантарса паѯĕ. Вăл хаљхи кăпиталисăмăн мĕн пур ӳсĕмĕ шултра происвотствă вак происвотствăна хĕссе кăларасси патне илсе пынипе, опѯăна сотсиалисăм йĕркипе орканисатсилеме кирлĕ условисем тăвас çĕрелле илсе пынине кăтартрĕ. Вăл тымарланнă йăласен, политтĕкри              хархашусен, тĕрлĕ саккунсен, ѯейе вĕрентӳсен витти айĕнѯе **классен кĕрешĕвне**, пур тĕрлĕ пуйан классем ѯухăнсен массипе, мĕн пур ѯухăнсен пуçĕнѯе тăракан **пролеттариатпа** кĕрешнине курма вĕрентрĕ. Вăл револ̄ютсиллĕ сотсиалиссен парттин ѯăн-ѯăн сатаѯĕ: опѯăна çĕнĕлле йĕркелемелли плансем шухăшласа кăларасси мар, кăпиталиссемпе вĕсен хыçĕнѯен сĕтĕрĕнекенсене рапоѯѯисен пурнăçне лайăхлатма ӳкĕтлесси мар, сакăвăрсем тăвасси мар,—**пролеттариатăн клас кĕрешĕвне орканисатсилесси, çак кĕрешĕве йертсе пырасси пулаҭ, тенĕ, çак кĕрешӳн тĕп тĕллевĕ—пролеттариат политтĕк влаçне туртса илсен сотсиалисăм опѯине орканисатсилесси пулнине** кăтартрĕ" (Ленин).

**Маркс** вĕрентĕвĕн **тĕп вырăнĕнѯе**, унăн варринѯе—**пролеттари тиктаттурĕ** ыйтăвĕ тăраҭ. Çавăнпа та

„кам классен кӗрешӳне çеç йышӑнат, вӑл маркçис мар-ха, вӑл пуршуаллӑ шухӑшлассипе пуршуаллӑ политтӗк калӑпӗнҫен тухмасӑр та тӑма пултарат-ха. Маркçисӑма классен кӗрешӗвӗ çинҫен вӗрентнипе çеç ҫарса хуни вӑл—маркçисӑма пӗҫӗклетнине, ӑна пӑснине, ӑна пуршуаçийе килӗшӳллисемпе çеç ҫарса хунине пӗлтерет. Классен кӗрешӗвне йышӑнассине пролеттари тиктаттурӗне çити саракан çеç маркçис пулат" (Ленин).

Маркçисӑм вӑл пӗтӗм етемӗн ҫи ҫаплӑ çыннисем вӗренсе çитернӗ ӑслӑлӑх çинҫе, пӗтӗм етем историйӗн оппӑҫӗ çинҫе тӗрекленсе тӑрат, вӑл „пӗтӗм тӗнҫери тсивилисатси ӳсӗмӗн аслӑ çулӗ айккинҫе мар пуçланса кайнӑ" (Ленин), вӑл пӗтӗм етемӗн малта пыракан пайӗ лартнӑ мӗн пур ыйтусене ответ панӑ. „Маркс вӗрентӗвӗ пур йенҫен те вӑйлӑ, мӗншӗн тесен вӑл тӗрӗс вӗрентӳ. Вӑл пӗтӗмлӗхлӗ, йӗркеллӗ, вӑл етеме тӗнҫе çине мӗнле пӑхмаллине кӑтартса парат, вӑл нимӗнле тӗшмӗшлӗхпе те, нимӗнле реаксипе те, пуршуаçи пусмӑрлӑхне нимӗнле хӳтӗленипе те килӗшме пултараймаст. Етем XIX-мӗш ӗмӗрте нимӗçсен философфийӗнҫе, акӑлҫансен политтӗк екрономийӗнҫе, франтсуссен сотсиалисӑмӗнҫе тунисен ҫи лайӑх йенӗсене вӑл хӑй аллине тивӗçлипе илнӗ" (Ленин).

Маркс пурӑннӑ вӑхӑт—револютсиллӗ вӑхӑт пулнӑ. Анҫах вӑл вӑхӑт пролеттари револютсисен вӑхӑҫӗ мар, пуршуаллӑ-темократтиллӗ револютсисен вӑхӑҫӗ пулнӑ. Ун ҫухне опҫӑ хӑйӗн феоталисӑмлӑ кивӗ тӑллисенҫен, кивелнӗ уҫрештенисенҫен хӑтӑлса çитессишӗн, пуршуаçи политтӗк йӗркине хӑйӗн економӗк майлӑ çавӑрса çитерессишӗн кӗрешнӗ. Анҫах çак çӗнӗ опҫӑ ӑшӗнҫех, çав вӑхӑтрах феоталисӑма хирӗç тӑракан пуршуаçипе сотсиалисӑмшӑн тӑракан пролеттариат хушшинҫе хире-хирӗçлӗх çивӗҫленни палӑрса пырат. Пролеттариат револютсире хӑйне уйрӑм клас пулса кӗрешме пуçлат, пуршуаçи вара çӗнӗ вӑй—пролеттариат—унӑн (пуршуаçин) вилӗм шӑтӑкне ҫавакан вӑй иккенне сисет.

Анҫах пролеттариат вăл вăхăтра хăйĕн йышĕ йенҫен те, пĕрлешесси йенҫен те, ăстăнĕ йенҫен те малтанхи пусăмра ҫеҫ тăнă. Вăл вăхăтра рапоҫҫисен йухăмĕнҫе Маркс ҫенхи тĕрлĕ теорисем, маркҫисăмшăн йут теорисем ирĕккĕнех ҫӳренĕ. Ҫавăнпа та рапоҫҫисен йухăмне ăслăлăх теорийĕ ҫинҫе орканисатсилесси пит йăвăр пулнă. Анҫах Маркспа унăн йулташĕ Енкĕлс мĕн пур йăвăрлăхсене ҫĕнтерсе, рапоҫҫисен йухăмне малалла илсе пырас тĕлĕшпе теори, политтĕк, орканисатси ĕҫне мĕн пур вăйпа туса пыраҫҫĕ, рапоҫҫисен йухăмĕнҫи тĕрлĕ сийенлĕ теорисемпе, оппортунисăмпа икĕ фронтпа пит хытă кĕрешсе пыраҫҫĕ. Ҫапла маркҫисăм хăйĕнҫе револҫутсиллĕ теорипе револҫутсиллĕ практĕке, сотсиалисăмпа рапоҫҫисен йухăмне ним уйрăлми пĕрлештерсе тăрат. Маркс та хăйĕн ĕҫĕнҫе ҫавăн пекех аслă револҫутсионерăн, политтĕкҫĕн, ҫаплă уҫҫонăйăн ĕҫĕсене ним уйрăлми пĕрлештерсе туса пынă.

## Маркс вĕрентĕвĕ сарăлса пыни

Рапоҫҫисен йухăмĕ сарăлса, вăйланса пынăҫемĕн маркҫисăм тĕнҫери рапоҫҫисен револҫутси йухăмĕнҫе тĕп вырăн йышăнат. Ленин „Карл Маркс вĕрентĕвĕн историллĕ кунҫулĕсем“ йатлă стайара (1913 ҫ.) Маркс вĕрентĕвĕ рапоҫҫисем хушшине мĕнле сарăлса пынине, вăл мĕнле пысăк маттериаллă вăй пулса пынине кăтартса парат. Ҫак ҫĕнтерӳ ҫулне пысăккăн илсе виҫĕ тапхăра уйăрат.

Пĕрремĕш тапхăр—1848—1871 ҫ.ҫ. 1848 ҫулти револҫутси мĕн пур вак пуршуаллă, реформисла вĕрентӳсене ҫапса ҫĕмĕрет, пур ҫĕршывсенҫе те пур классен сăн-сăпатне, вĕсен вырăнне кĕрешӳре кăтартса парат, пролеттариат ҫеҫ сотсиалисăмăн ҫăн-ҫăнах кĕрешекен пĕртен-пĕр клас пулнине татăклăн кăтартат. Пролеттариат хăйне уйрăм орканисатсиленсе пырат, Маркспа Енкĕлс йертсе пынипе, тĕнҫери рапоҫҫисен пĕрлешĕвне—Пĕрремĕш Интернатсионала—орканисатсиленет.

„Иккĕмĕш тапхăр (1872—1904 ҫ. ҫ.) пирвайхи

тапхăртан „лăпкă“ характĕрпа, револютсисем пулманнипе уйăрăлса тăрать. Хĕвеланăç пуршуаллă револютсисене пĕтернĕ. Хĕвелтухăç вĕсем патне ўссе çитеймен“. Çак тапхăрта сотсиалиссен парттийĕсем çирĕпленсе, ĕçĕсене сарса вăйлатса пыраççĕ, маркçисăм сарăлса çĕнтерсе пырать, Иккĕмĕш Интернатсионал пулса тăрать. Пролеттариат малашнехи аслă револютсисене йерипен, анђах çирĕппĕн хатĕрленсе пырать.

Маркçисăм рапођђисен йухăмĕнђе тĕнђипех çĕнтернĕ пирки вара пуршуаçи хăйĕн реформисла шухăшĕсене, рапођђисене револютсирен пăрас ĕçне маркçисăма хирĕç тўрех кĕрешсе туса пыраймиpулать, вăл çакна çĕнĕ майпа тума тытăнать: вăл рапођђисен йухăмне хăйĕн шухăшне сармашкăн çийелтен маркçисăма йышăнать, анђах унăн револютсилĕхне кăларса ывăтма тăрăшать. Çапла „ăшĕнђенех çĕрсе пĕтнĕ липералисăм хăйне сотсиалисла оппортунисăм пулса ђĕртме хăтланать“.

Виççĕмĕш тапхăр—револютсисен тапхăрĕ. Пролеттариат маркçисăм йалавĕпе, унăн вĕрентĕвĕ тăрăх, тĕнђери револютсишĕн кĕрешес ĕç умне пырса çитет, револютсисен самани тапранса кайать. Маркçисăм тĕнђери пролеттариата тĕнђери сотсиалисăмлă револютсишĕн кĕрешме йертсе пырса пурнăçланать.

## Оппортунисăмпа кĕрешни

Иккĕмĕш Интернатсионалăн пĕтĕм тапхăрĕнђе пур çĕрте те сотсиал-темократсен парттийĕсенђе револютсиллĕ çунатпа оппортунисла çунат хушшинђе çапăçу пынă. Оппортунисăм теори тĕлĕшпе Маркс шултра происвотствă вак происвотствăна çĕнтерсе пыни çинђен вĕрентнине, пĕр йенђе (пуршуаçин) пуйанлăх ўссе пынипе пĕрле тепĕр йенђе (пролеттариат) ђухăнланса пыни çинђен вĕрентнине сўрĕлтерме тăрăшнă. Йалхуçалăхĕнђе те кăпиталисăм промышлĕннăçри саккунсемпех çĕнтерсе пынине йышăнман, т. ыт. те. Кулленхи ĕçре оппортуниссем классем хушшинђе хирĕçўсене шăлса лартса, рапођ-

ђи класа пуршуаçипе пĕр пулса ĕçлеме ђĕнне. Оркаинсатси ыйтăвĕсем тĕлĕшпе вĕсем „крțттĕклемелли ирĕк“, парттийе шалтан пăсмалли ирĕк ыйтнă.

Иккĕмĕш Интернатсионалта ђи хисеплĕ вырăнта тăракан Каутски, тата унăн ытти çулпуçĕсем (ђентриссем) çак оппортунисăма хирĕç çийелтен çеç кĕрешкеленĕ. Сăмахпа маркçисăма йышăнса, ĕçре оппортунисăма пăртаккăн пăртаккăнах парăнса, кайран вара маркçисăма хирĕç кĕрешекенсем, рапођђисене пуршуаçи аллине тытса параканскерсем пулса тăраççĕ.

Иккĕмĕш Интернатсионалра пуç пулнă оппортунисăма хирĕç ленинисăм (полђшевисăм) çеç хăй пуçланнăранпах çивĕђђĕн кĕрешсе пынă. Полђшевисăм „Иккĕмĕш Интернатсионалăн оппортунисăмпе хирĕç çапăçса ӳссе çирĕпленнĕ, çак оппортунисăмпа кĕрешесси кăпиталисăмпа кĕрешмешкĕн малта кирлĕ услови пулнă“ (Сталин).

Полђшевиксен парттийĕ çеç тĕнђере мĕн хăй пуçланнăранпах Раççейри сотсиал-темократсен рапођђи парттийĕнђи, тата Иккĕмĕш Интернатсионал мĕн пур оппортунисăмран, ђентрисăмран уйрăлса кайас çулйĕр тытса пынă. Вырăс полђшевикĕсем империалисăм вăрçиђђен нумай малтан (1904—1912 çулсенђех) Иккĕмĕш Интернатсионалри оппортуниссемпе ђентриссенђен уйăрăлас çулйĕр тытман пулсан, вĕсем хăйсен ĕретĕнђи оппортуниссенђен, ђентриссенђен, оппортуниссемпе килĕштерекенсенђен уйăрăлайман пулĕђђĕç. Вырăс полђшевикĕсем хĕвеланăçĕнђи „сулахай ратиккалсене“ хăйсен ĕретĕнђи оппортуниссенђен, ђентриссенђен уйăрас тесе мĕн пур майсемпе тăрăшнă. Анђах „сулахай ратиккалсем“, полђшевиксемпе меншевиксем хушшинђе иккĕленсе тăнăскерсем, çавах та вырăс полђшевикĕсен çулĕпе каймалăх пиçсе çитеймен.

Тĕнђипе те полђшевиксем çеç хăйсен мĕн пур историйĕнђе тĕнђери „çĕнĕ сăнарлă“ парттин мĕн пур оркаписаттăрĕсем пулмашкăн хатĕрленсе çитнĕ. Ленинисăм парттийĕ, полђшевиксен парттийĕ—про-

леттариата кăпиталисăма çĕнтерме тĕрĕс йертсе пыракан çак çĕнĕ сăнарлă партти пулнă. Ленин револютсиллĕ маркçисăма ђĕртсе йађĕ çеç мар, вăл револютсиллĕ теорипе практĕккăн пур йенĕçене те малалла аталантарса йарса пыђĕ, вăл вăрçăђђенхи тапхăртах польшевиксен парттине орканисатсиленипе —Октăпĕр револютсипе Комуниссен Интернатсионалĕ ваљљи никĕс хурс, пролеттариата çĕнтерӳсем патне илсе çитерђĕ.

## Ленинисăм—империалисăмпа пролеттари револютси саманинђи маркçисăм

„Ленинисăм вăл—империалисăмпа пролеттари револютсин саманинђи маркçисăм, тĕрĕсрех каласан: ленинисăм вăл—пролеттари револютсин теорийĕпе тактĕкĕ, уйрăмăнах вăл—пролеттари тиктаттурĕн теорийĕпе тактĕкĕ.

Маркспа Енкĕлс револютси умĕнђи вăхăтра (епĕр пролеттари револютси çинђен калатпăр), империалисăм çитĕнсе çитмен вăхăтра, пролеттарисем револютсийе хатĕрленсе пынă вăхăтра, пролеттари револютсийĕ пайанхи ĕç пулман вăхăтра пурăннă. Маркспа Енкĕлсăн вĕренекенĕ Ленин империалисăм çитĕнсе çитнĕ вăхăтра, пролеттари револютсийĕ сарăлса пынă вăхăтра, пролеттари револютсийĕ пĕр çĕршывра çĕнтерсе, пуршуаллă темократтийе çĕмĕрсе, пролеттарисен темократти саманине, Совет саманине уçнă вăхăтра пурăннă. Акă мĕншĕн ĕнтĕ ленинисăм маркçисăмăн малалли ӳсĕмлĕхĕ пулаť" (Сталин).

Маркс та, Ленин та маркçисăм вĕрентĕвĕ пĕр вырăнта хытса ларма пултарайманнине, вăл „пролеттариатăн класс кĕрешĕвĕнђи çĕнĕ оппăтпа пуйанланса пымасăр, вăл çак оппăта маркçисăм йенђен, маркçисăм меслеђĕ йенђен тĕпђесе тухса" (Сталин) малалла каймасăр тăма пултарайманнине темиçе хутђен те кăтартса панă.

XIX-мĕш ĕмĕр вĕçнелле кăпиталисăм хăйĕн ӳсĕ-

мĕн çĕнĕ, йулашки тапхăрне—империалисăм тапхăрне кĕрсен, револ̧утсиллĕ тăвăлсен çĕнĕ самани пуçланса кайсан, пролеттариат умне, çĕнĕ саманари условисене кура, çĕнĕ питех те пысăк револ̧утсиллĕ сатаӡсем тăнă.

„Çав çĕнĕ сатаӡсене кивĕ сотсиал-темократтиллĕ парттисен вăйĕпе, парламенттарисăмăн лăпкă условийĕсенӡе çитĕннĕскерсен вăйĕпе тума пулаť тесе шухăшлани вăл—хăна-ху пĕтерни... пулаť. Кивĕ парттисем пуç пулса тăнă ӡухне çав сатаӡсене тăвас тени—йăлтах хĕçпăшалсăр тăрса йулассине пĕлтерет. Пролеттариат çавăнпа килĕшес çукки çинӡен кăтартса пама та кирлĕ мар.

Çакăнтан ĕнтĕ çĕнĕ партти, çапăçуллă партти, пролеттарисене влаçшăн кĕрешме йертсе пымашкăн çителĕклĕ хăйуллă, револ̧утси ӡухнехи йăвăр условисенӡе çул тупмашкăн çителĕклĕ оппăтлă, тата тĕллев патне кайас çул çинӡе тĕл пулакан шыв айĕнӡи мĕн пур ӡулсенӡен иртсе каймашкăн çителĕклĕ çирĕп партти кирли тухса тăраť.

Çакăн пек парттисĕр империалисăма сирпĕтесси çинӡен, пролеттари тиктаттурне кĕрешсе илесси çинӡен шухăшламалли те çук. Çак çĕнĕ партти ленинисăм парттийĕ пулаť“ (Сталин).

Раççей ленинисăм пуçланса çирĕпленнĕ çĕршыв пулни ăнсăртран килмен. Историрен килекен, тата опӡăпа екрономĕк йĕркинӡен килекен ӡылай условисем пирки, Раççей империалисла хирĕçӳсен тĕнӡери тĕвви пулнă. Раççей капиталисăм пусмăрĕ уйрăмах ирсĕр, уйрăмах тӳсмелле мар формăпа пулса пынă, крепăслă, тата натсиллĕ пусмăрлăхпа çак пусмăр темиçе хут вăйланнă.

„Револ̧утси пулас тĕлĕшпе Раççей ытти кирек хăш çĕршывсенӡен те ытларах хатĕрленсе пынă“ тет Сталин йул. Çакăнтан ĕнтĕ тĕнӡери револ̧утси мĕн пирки Раççейре пуçланса кайни паллă. Çакăнтан ĕнтĕ мĕн пирки ленинисăм Раççейре çирĕпленсе ӳсни курăнсах тăраť.

Ленинисăм маркçисăмăн ӡи тĕреклĕ никĕсĕ çинӡе

пуçланса кайнă. Тепĕр йенҫен çак кранит пек çирĕп теориллĕ никĕс çинҫе ӳснĕ пољшевисăм тĕнҫери револютсиллĕ пролеттариат йухăмĕн пĕтĕм пуйан оппăтне хăй çине илнĕ. Вăл маркçисăм теорийĕн тасалăхĕшĕн икĕ фронтпа кĕрешсе пырса пролеттариатăн историллĕ сатаҫĕсене татмалли çивĕҫ хĕçпăшал пулса тăнă.

Ленин маркçисăма пур йенҫен те, çĕнĕ условипе çĕнĕ оппăта кура, малалла илсе пынă. Маркçисăмăн философфине, политтĕк еккономине, клас кĕрешĕвĕн теорине пурне те çӳлти пусăма хăпартнă. Сталин йул. каланă тăрăх, уйрăмăн илсен Ленин, пĕрремĕшĕнҫен, „Кăпиталăн" тĕп шухăшĕсем çине тĕренсе, империалисăмăн йухан-суранĕсене, вĕсем мĕнрен килнине, империалисăм пурпĕрех пĕтессине кăтартса империалисăм кăпиталисăмăн йулашки тапхăрĕ пулса тăнине тĕплĕн маркçисла тĕпҫенĕ. Çак тĕпҫев çинҫе ĕнтĕ Ленинăн паллă шухăшĕ, империалисăм условийĕсенҫе уйрăм илнĕ кăпиталисăмла çĕршывра сотсиалисăм çĕнтерме пултарни çинҫен калакан шухăшĕ пуçланса кайнă.

Иккĕмĕшĕнҫен, пролеттари тиктаттурĕн ыйтăвне малалла йанă. Пролеттари тиктаттурĕн тĕп итейне Маркспа Енкĕлс кăтартса панă. Ленинăн çĕннисем ку тĕлĕшпе çаксем пулса тăраççĕ: а) вăл пролеттари тиктаттурĕн патшалăхлă форми совет влаçĕ пулнине тупнă, ăна вăл Париш Комунĕпе Раççейри револютси оппăҫĕпе усă курса тунă; у) вăл пролеттари тиктаттурĕ формулинҫи скопкăсене пролеттариатăн сойуçнĕкĕсен ыйтăвĕ тĕлĕшпе уçса панă, пролеттари йертсе пыракан пролеттариатпа ун хыççăн пыракан пролеттариллĕ мар классен (хресҫенсен, т. ур.), експлуаттатсире пурăнакан массисен уйрăм формăллă класлă сойусĕ пулса тăнине кăтартса панă; ы) вăл пролеттари тиктаттурĕ класлă опҫăри темократтиҫи çӳлти сăнарĕ пулса тăнине, сахалтараххисен (експлуаттаттăрсен) интересĕсене палăртакан кăпиталисăмлă темократтине хирĕç нумайтараххисен (експлуаттатсирисен) интересне палăртакан пролетта-

ри темократтин формн пулса тăнине уйрăмах вăйлăн кăтартса панă.

Виççĕмĕшĕнђен, пролеттари тиктаттурĕ тапхăрĕнђе, кăпиталисăмран комунисăма куçакан тапхăрта, кăпиталисăмлă патшалăхсем хупăрласа тăракан çĕршывра сотсиалисăм строиттĕлствине çитĕнӳллĕ туса пырассин формисемпе меслеђĕсем çинђен тăракан ыйту. Марксла Енкĕлс пролеттари тиктаттурĕн тапхăрне револђутсиллĕ çапăçусемпе краштăн вăрçисен ђылай вăрăм тапхăрĕ тесе, влаçа тытса тăракан пролеттариатăн çав тапхăрта кăпиталисăм вырăнне сотсиалисăмлă опђă, классăр опђă, патшалăхсăр опђă тума кирлĕ екකономĕклĕ, политтĕклĕ, кулђттурăллă, тата орканисатсиллĕ ĕçсене тумалла тесе шутланă. Ленин мĕн пуçламĕшĕнђен вĕçне çитиђђенех Марксла Енкĕлсăн çав тĕп шухăшĕсем çинђе тăрса: а) империалисăмла патшалăхсем хупăрласа тăракан пролеттари тиктаттурĕн çĕршывĕнђе сотсиалисăмлă опђă туса çитерме май пуррине çирĕплетсе кăтартса панă; у) екකономĕкри ђи çӳлти вырăнсене (промышлĕннăçа, çĕре, транспăрта, панкăсене, т. ур.) тытса тăракан пролеттариатăн екකономĕк политтĕкĕн çулĕсене, сотсиалисăмлă интустрипе йалхуçалăхне çыхăнтаракан çулсене („интустрипе хресђен хуçалăхĕ хушшинђи смыђкă“), çапла вара, пĕтĕм халăх хуçалăхне сотсиалисăм патне илсе пыракан çулсене татăклăн палăртса панă; ы) хресђенсен тĕп массине копператси урлă сотсиалисăм строиттĕлствине хутшăнтармалли çулсене татăклăн палăртса панă.

Тăваттăмĕшĕнђен, халăхăн кирек хăш револђутсийĕнђе те пролеттариат йертсе пырасси çинђен Марксла Енкĕлс вĕрентнĕ тĕп шухăшĕсем тăрăх: Ленин çав шухăшсене пролеттариат йертсе пырас ыйтăва çиçтемăна кĕртсе сарса малалла йанă, пролеттариат хуларипе йалти ĕçхалăх массисене патша йĕркипе кăпиталисăма хирĕç кĕрешнĕ ђухне çеç мар, пролеттари тиктаттурĕ вăхăтĕнђе те (сотсиалисăм строиттĕлствинђе) йертсе пырассине малалла йанă.

Ленинпа унӑн парттийӗ пулӑшнипе, пролеттариат йертсе пырас итей Раççейре пурнӑçа питех те лайӑх кӗни паллӑ ӗнтӗ. Раççейри револђутсире влаçа пролеттариат туртса илни те çавӑнтан килет ӗнтӗ.

Пиллӗкӗмӗшӗнђен, натсипе колони ыйтӑвне малалла йанӑ. Маркспа Енкӗлс натсипе колони ыйтӑвӗ тӗлӗшпе çул кӑтартса паракан итейсем парса хӑварнӑ. Ленин хӑйӗн ӗçӗсене çав итейсен никӗсӗ çинђе туса пынӑ. Ленинӑн çӗннисем ку тӗлӗшпе çаксем пулса тӑраççӗ: а) çав итейсене пухса вӑл империалисӑм саманинђи натсипе колони револђутсийӗсем çинђен вӗрентекен çиçтемӑ туса хунӑ; у) натсипе колони ыйтӑвне империалисӑма ишес ыйтупа çыхӑнтарнӑ; ы) натсипе колони ыйтӑвӗ пӗтӗм тӗнђери пролеттари револђутси ыйтӑвӗн пайӗ пулса тӑнине пӗлтернӗ.

Йулашкинђен, пролеттариатӑн парттийӗ çинђен калакан ыйту. Маркспа Енкӗлс партти пролеттариатӑн малта пыракан отређӗ пулса тӑнине, унсӑр (парттисӗр) пролеттариат ирӗке тухма пултарайманнине кӑтартакан тӗп шухӑшсем парса хӑварнӑ. Ленинӑн çӗннисем ку тӗлӗшпе çаксем пулса тӑраççӗ: вӑл çав тӗп шухӑшсене пролеттариатӑн империалисӑм тапхӑрӗнђи кӗрешӗвӗн çӗнӗ условийӗсене кура малалла йарса çаксене кӑтартса панӑ: а) партти, пролеттариатӑн ытти орканисатсийӗсемпе (профсойуссем, копператси, патшалӑх орканисатсийӗ) танаштарсан пролеттариатӑн класлӑ орканисатсийӗн ђи аслӑ форми пулса тӑрать; у) пролеттари тиктаттурӗне, ӑна йертсе пыракан партти урлӑ çеç пурнӑçа кӗртме пулать; ы) пролеттари тиктаттурӗне пӗр партти, комуниссен парттийӗ йертсе пырать пулсан çеç, пролеттари тиктаттурӗ тулли пулма пултарать, çав партти йертсе пырас ӗçе урӑх парттипе уйӑрса памасть ӑна, унӑн уйӑрмалла та мар; ӑ) парттире тимӗр пек çирӗп тистсиплинӑсӑр пролеттари тиктаттурӗн експлуататтаттӑрсене путарса лартассипе класлӑ опђӑран сотсиалисӑмлӑ опђӑ тӑвас сатађӗсем пурнӑçа кӗме пултараймаççӗ.

Çавăнпа та: ленинисăм империалисăмпа пролеттари револ̧утсийĕсен саманинђи маркçисăм пулса тăрать.

## Сотсиал-фашшисăм маркçисăм-ленинисăма хирĕç

Етем историйĕн XIX мĕш ĕмĕрте пурăннă икĕ çап-çут çăлтăра, К. Маркспа Ф. Енкĕлса, ăслăлăхлă сотсиалисăма пуçарса йанăскерсене, револ̧утсиллĕ кĕрешĕвĕн ђапла теореттĕкçисене, пит те аслă стратекçĕсемпе тактĕкçĕсене, пĕтĕм тĕнђери рапођђисен револ̧утсиллĕ йухăмне ђĕрĕ ђун кĕртсе йертсе пынăскерсене тĕксĕмлетсе, пĕђĕклетсе кăтартма сотсиал-фашшиссем пĕтĕм вăйа хурса тăрăшаççĕ. Маркспа Енкĕлса кăпинетран тухса ђăн-ђăн пурнăçа ђухласа курман çынсем пек, пуçĕсенђен шухăшласа кăларнă пурнăçа кăна пĕлнĕ çынсем пек кăтартма тăрăшаççĕ. Мĕншĕн ун пек хăтланаççĕ ха сотсиал-фашшиссем? Маркспа Енкĕлс вĕрентнине пăснипе пĕрлех, ăна суйана кăларма хăтланнипе пĕрлех револ̧утсиллĕ теорипе револ̧утсиллĕ практĕка пĕрне тепринђен уйăрасшăн, пĕри теприпе çыхăнса тăманнине, çыхăнса тăма кирлĕ ге маррине кăтартасшăн вĕсем. Револ̧утсиллĕ теорипе револ̧утсиллĕ практĕк пĕри теприпе çыхăнса тăма кирлĕ марри çинђен „ĕнентерсе“ парсан, паллах, хăйсен куллен-кун рапођђи класа сутас ĕçне те тӳрре кăларнă пулĕђђĕç.

Сотсиал-фашшиссем йевĕрлех Маркс—Енкĕлс—Ленин вĕрентнине меншевик Рязанов та сахал мар пăснă Ленина пĕтĕм тĕнђери рапођђи класăн теореттĕкĕ, унăн аслă çулпуçĕ, пĕтĕм тĕнђери рапођђи класăн талантлă органисаттăрĕ тесе Рязанов шутламасть; ленинисăм империалисăмпа пролеттари револ̧утсин саманинђи маркçисăм пулса тăнине йышăнмасть; Ленинпа Маркс хушшинђе ‚хирĕçӳсем“ шырать. Маркçисăма сотсиал-фашшисăма килĕшӳллĕ таран „тасатса“, пуршуаçийе килĕшӳллĕ таран „çĕнетсе“ пыђĕ. (Рязановăн Маркспа Енкĕлс çинђен елеклесе çырнă кĕнеки И. Яковлев йађĕпе ђăвашла та кон-

трапантăланса тухнă. Çак йапала, тата А. Красновăн, Ф. Н. Çеркейĕвăн ессерла кĕнекисем те тухма пултарни—пирĕн сисĕмлĕхпе çивĕђлĕхе калама çук хытă вăйлатма кирлине кăтартаť). Çапла вара теори тĕлĕшпе те кулленхи ĕçĕнђе те Рязанов Октапĕр револютсин ђи хайар тăшманĕсене хӳтĕлесе пулăшса пыђĕ. Çавăнпа та Рязанова Маркспа Енкĕлс инçтитуђĕн тиректăрĕнђен кăларсан II-мĕш Интернатсионалăн çулпуçĕсем—Каутскисем сахал мар хуйхăрђĕç; Рязанова Маркспа Енкĕлс институђĕн тиректăрĕнђен кăларса ывăтсан Маркс Енкĕлс инçтитуђĕ тинех Маркс—Енкĕлс вĕрентнине пĕр пытармасăр рапођђисем хушшинђе сарас тĕлĕшпе пĕтĕм вăйа хурса ĕçлессе сисрĕç.

## Сталин й. маркçисăм-ленинисăма малалла илсе пыраť

Ленин вилнĕренпе пирĕн партти, маркçисăм-ленинисăм теорийĕ тăрăх ĕçлесе, çĕнĕрен-çĕнĕ пысăк çĕнтерӳсем турĕ. Çавăнпа пĕрлех, сотсиалисăм строиттĕлствин çĕнтерĕвĕсемпе тĕнђери револютсиллĕ йухăмăн çĕнĕ оппăђĕ маркçисăм-ленинисăм теорине те тата малалла илсе кайма хушрĕç, ăна малалла илсе кайма май пађĕç. Иртнĕ пилĕкçуллăх хушшинђе пурнăçа кĕртнĕ çĕнĕ ыйгусем вĕсем кунсеренхи ĕç çеç пулман, çав вăхăтрах вĕсем калама çук пысăк теориллĕ ĕçсем те пулса тăраççĕ. Çак çĕнĕ çĕнтерӳсене епĕр **Сталин** й. йертсе пынипе туса пыратпăр, вăл йертсе пынипе тĕнђе историйĕшĕн паллă ĕçсене пурнăçа кĕртсе пыратпăр.

Сталин й. Ленинăн ђи лайăх вĕренекенĕ. Вăл маркçисăм-ленинисăм теорине сотсиалисăм строиттĕлствин çĕнĕ оппăђĕсем тăрăх пуйанлатса пыраť. Сталин й. маркçисăма-ленинисăма пăсакансене хирĕç икĕ фронтпа вирлĕн кĕрешсе пыраť. Сталин й.—пĕтĕмĕшпе сылтăм оппортунисăмăн теориллĕ никĕсне паракан механиссене (Пухарин, т. ыт.), тата пĕтĕмĕшпе тротскисăмпа „сулахайла“ пăрăнђăксене теориллĕ никĕс паракан меншевиксем таран анакан итеали-

сӑма (Тепорин, т. ыт.) **хирĕç кĕрешме** партти пе унăн пĕтĕм теориллĕ вăйне мопилисатсилесе, çак мĕн пур оппортуниссене теорире те, практĕкре те çапса салатрĕ. Сталин йулташ Маркс—Енкĕлс—Ленин кăтартса панă тĕп итейсене сотсиалисăм строиттĕлствин çĕнĕ условисенђе малалла илсе пырать, классăр сотсиалисăмлă опђă тăвас çула вăл маркçисăм-ленинисăм прошектăрĕпе çутатса, çав çул тăрăх рапођђи класпа хресђенсене çĕнĕ çĕнтерӳсем патне илсе пырать

„**Сталин й.** Совет çĕршывне интустрилес ыйтăва, машинисатсилес ыйтăва малалла илсе пыђĕ. **Сталин й.** пуçарса йанă тăрăх машинпа трактăр стантсисем çинђен тăракан ыйтăва лартнă. Çавăн пекех **Сталин й.** кулаксен класне пĕтерес ыйтăва лартрĕ. Сталин й. хресђен хуçалăхĕпе происвотствăллă смыђкă туса пырас ыйтăва малалла йађĕ. Сталин й. пĕр çĕршывра сотсиалисăм тума пуласси çинђен Ленин вĕрентнине малалла илсе пыђĕ.

Çаксене пула... **пирĕн партти пирĕн çĕршывра сотсиалисăм туса çитерме пултарассине, вăл çĕнтерессине ĕçрэ кăтартса пађĕ.** Çаксем пурте вĕсем пирĕн çĕршывшăн çеç мар вырăн йышăнса тăраççĕ. Капиталисăмран комунисăма куçмалли майсем пурте пĕтĕм тĕнђери пролеттарисемшĕн питĕ паха, мĕншĕн тесен çак майсем комунисăм опђи **тумалли меслетсем, формăсемпе çулсем** пулса тăраççĕ.

Акă мĕн пирки партти ăстăнĕнђе **Сталин й.** йађĕ хаљ ăслăлăхлă сотсиалисăма пуçарса йанă ђаплă уђитлĕсен йађĕсен ĕретĕнђе тăрать" (Стецкий).

## Ђăваш парторканисатси маркçисăм-ленинисăм йалавне çӳлте çĕклесе пырать

Ĕлĕк колони вырăнĕнђе тăрса виçĕ хутлă (капиталисăм, помешђĕкпе феоталлă йĕрке, вырăнти ђăваш пуржуаçи) пусмăра тӳснĕ ђăваш ĕçхалăхне Октапĕр револђутси автономи парса сотсиалисăмла хуçалăх тума ирĕкпе май пађĕ. Сотсиалисăмла опђă тăвас ĕçре Ç. П. Петров ленинла йертсе пыракан

ђăваш парторканисатсийĕ иртнĕ çулсем хушшинђе пит те пысăк çитĕнӳсем турĕ.

Паллах, вăл çитĕнӳсене кĕрешӳсĕр, вăйа хурса ĕçлемесĕр тума пултарайман: ђи малтан маркçисăм-ленинисăм вĕренгĕвĕнђен—**парттин тĕп çулйĕрĕнђен**—теорире тата куллен-кунхи ĕçре те пăрăнакансемпе: „сулахайрисемпе" те, сылтăмрисемпе те, ку тапхăрта ђи хăрушăлăраххисемпе, тата пуршӳаллă натсионалиссемпе пит те вирлĕн кĕрешнипе кăна тума пултарнă.

Ђăваш хуçалăхĕшĕн малалла çутă кунçулсем çук, вăл малалла ӳссе вăйланса пырас выранне кайалла ђакса йухăнса пырат, сотсиалисăм патне илсе пыракан аслă çул çинђен айаккалла тĕртсе йанипе пĕђĕк çулсем тăрăх аташса çӳрет тенине—елменĕвшђинăна—Ђăваш парторканисатси, Ç. П. Петров йертсе пынипе, теори тĕлĕшĕнђен те, кулленхи ĕçре те, пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе тăкрĕ.

Ђăваш парторканисатси нимĕнле йăвăрлăх умĕнђе те маркçисăм-ленинисăм йалавне пăрахма мар, пĕр саманта та алăран йамаст; теори тĕлĕшпе хăйне куллен-кун вăйлатса маркçисăм-ленинисăм йалавне çӳлерен çӳлерех йăтса, пирĕн респуплĕкри рапођђисемпе ĕçхалăх массисене сотсиалисăм фронтĕнђе çĕнĕ çĕнтерӳсем патне паттăрăн малалла илсе пырат.

* * *

*Маркс—Ленин йалавĕпе* пролеттариат тĕнђен улттăмăшĕн пайĕнђе експлуататтăрсене çĕнтерсе хăйĕн тиктаттурине çирĕплетрĕ. *Маркс—Ленин* йалавĕ айĕнђе кĕрешсе епĕр сотсиалисăм строиттĕлствин фронтĕнђе пĕтĕм тĕнђе историйĕшĕн паллă çĕнтерӳсем турăмăр. *Маркс—Ленин* йалавĕпе епĕр сотсиалисăмлă опђă туса çитерĕпĕр. *Маркс—Ленин* йалавĕ айĕнђе пĕтĕм тĕнђери пролеттариат етеме пусмăрлă йĕркерен хăтарассишĕн кĕрешет.

Иккĕмĕш пилĕкçуллăхра пирĕн партти „кăпиталисăмлă елементсене, çавăн пекех тата классене те пĕтĕмĕшпех татăклăнах пĕтерес, класла уйрăмлăхсемпе експлуаттатсине кăларса тăракан сăлтавсене пĕтерес,

економĕкре тата çынсен ăстăнĕнҫе те кăпиталисăм йулашкисене çĕнтерес, çĕршыври пĕтĕм ĕçхалăхне классăр сотсиалисăмлă опҫăн ăнланулла активлă строиттĕлĕсем тăвас“ политтĕклă тĕп сатаҫ лартрĕ. Маркс—Енкĕлс—Ленин—Сталин вĕрентĕвĕпе хĕçпăшалланса епĕр çак ҫаплă сатаҫа пурнăçа ăнăçлăн кĕртĕпĕр.

Çак сатаҫ пире **маркçисăм-ленинисăм теорине** вĕренес ĕçе тата питрех **вăйлатма** хушаť, мĕншĕн тесен експлуататтаттăрла классене хайар кĕрешÿре пĕтерес ĕçре, пĕтĕм ĕççыннисенҫĕн активлă сотсиалисăм строиттĕлĕсем тăвас ĕçре, сотсиалисăм тăвас ĕçре, пролеттариат Маркс—Енкĕлс—Ленин—Сталин вĕрентĕвĕпе хĕçпăшалланса çеç çĕнтерсе пыма пултараť, çĕнтерсе пыраť.

---

Составители: **Алендеев Г. Т. и Ивлев Д. О.**

Под наблюдением редактора Чувашгиза Алендеева Г. Т.
Технический редактор Вислобоков Б.
Сдано в набор 4/III-1933 г.
Подписано к печати 9/III-1933 г.
Ответ. корректуру держал Алексеев.

Чувашиздат № 57. Формат 62x105/32 1 1/2 печ. л. 3500 зн. в печ. л.
Тираж 4100 экз. Уполн. Чувашлита № 1355.

Тип. № 1 Чувашгиза. Чебоксары, ул. Канашская 10. Заказ № 273.

ХАКĔ 15 ПУС
ЦЕНА 15 КОП

К ПЯТИДЕСЯТИЛЕТИЮ со дня смерти КАРЛА МАРКСА

Чувашгиз 1933 Чебоксары